Шупашкар район хаçачĕ

# ТĂВАН ЕН

1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

134 (9577) № ✵ 2008 çулхи ноябрĕн (чӳк уйăхĕн) 19-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

## АГРАРИСЕН ТĔЛЛЕВĔ ТАТА ПЫСĂК

***Эрне кун, ноябрĕн 14-мĕшĕнче, Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн залĕ халăхпа лăк тулчĕ. Çук, пĕр-пĕр премьера пулнăран мар. Çав кун республикăн аграри секторĕ хăйĕн професси уявне паллă турĕ.***

Уява хутшăннă Чăваш Ен ертӳçи Николай Федоров калашле, унта чăваш хресченĕсемпе хресчен ĕçне ăнланакансем пухăннă. Кашни çынна çăкăрпа тивĕçтерекен чыслă-хисеплĕ çынсен умĕнче тата çавсен ячĕпе уявра нумай ăшă сăмах каларĕ Президент. Хăй кăна мар, РФ Президент Администрацийĕн ертӳçи С.Нарышкин, РФ ял хуçалăх министрĕ А.Гордеев, РФ Правительствин пуçлăхĕ В.Путин ячĕпе: вĕсем те чăваш хресченне саламлама ыйтнă.

Кăçалхи тăхăр уйăхра мĕн пур категориллĕ хуçалăхсенче ял хуçалăх продукцине туса илессине иртнĕ çулхи танлаштарулла тапхăртинчен 7,6 процент ӳстернĕ. Аш-какай илессине 5 процент, сĕт суса илессине 2,1 процент лайăхлатнă. Пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсене хуçалăхсем 535 пине яхăн тонна пухса кĕртнĕ. Гектар пуçне тухăç 22,2 центнера ларнă. Юлашкинчен асăннă цифра та, пĕтĕмĕшле пухса илнин кăтартăвĕ те пĕлтĕрхинчен самай пысăкланнă. Тухăçпа Елчĕк (26,8 центнер), Вăрмар (26,7 ц), Вăрнар (26,0 ц) палăраççĕ. Çĕр улми тухăçĕ республикăра 197,6 центнера ларнă, пĕтĕмпе âна 790 пин тонна пухса кĕртнĕ. 90-мĕш çулсем хыççăн республикăра ун пек аван кăтарту пулманнине шута илсен республика хресченĕн мăнаçланма та сăлтавĕ пур. Пахча çимĕç ӳстерессипе те ӳсĕмлĕ ĕçленĕ: 16 пин тонна пухса илнĕ е пĕлтĕрхинчен 33,5 процент нумайрах.

Чăваш Ен ертӳçи аграрисем умне маларах пĕрер миллион тонна çĕр улми тата пĕрчĕллĕ культурăсем туса илес задача лартни пирки те калаçу пулчĕ. Мăнаслă, анчах виççе хаклаçа палăртнă цифрăсем тесе йышăнчĕç âна аграрниксем. Килес çул, çитменнине, Чăваш Енре Ял хуçалăх çулталăкĕ пулать, пĕлтерчĕ Николай Федоров Президент.

Ял хуçалăхĕнчи ĕç-хĕл пирки доклад тунă ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев отрасле тĕрлĕ енлĕн тишкерчĕ. Ял çыннин пурнăçне лайăхлатас тесе патшалăх хăй енчен самай пулăшу кӳрет. АПК аталанăвĕ çинчен наци проекчĕ пурнăçланма тытăннăран вара республикăн агропромышленность комплексне тĕрлĕ çăл куçран 13,3 миллиард тенкĕ хывнă. Ку вăл унчченхи виçĕ çулхинчен виçĕ хут нумайрах. Михаил Васильевич уйрăм çынсем çăмăллăхлă кредит илесси хăш районта епле пынине те тишкерчĕ, хăшĕсене ӳпкев сăмахĕ лекрĕ. Ял хуçалăхĕнче хальхи вăхăт ыйтнă пек çĕнĕ йышши сысна комплексĕсемпе сĕт-çу фермисем çĕкленсе ларнине палăртнă май «Сувар-2» предприятин пирĕн районти Шĕнерпуçĕнчи тата «Ольдеевская» агрофирмăн Хыркассинчи комплексĕсене тĕслĕх евĕр асăнса хăварчĕ.

Кирек мĕнле уяври пекех чи хумханулла самантсенчен пĕри производствăра малта пыракансене чыслани пулчĕ. Пирĕн район тата район представителĕсем те унтан чыслăн-сумлăн таврăнчĕç. АПК комплексĕн аталанăвĕ çинчен калакан республика программине ăнăçлă пурнăçланăшăн çурçĕр районсем хушшинче эпир пĕрремĕш вырăна тухнă. Уншăн район ЧР Президентĕн аллинчен Диплома тивĕçрĕ тата 70 пин тенкĕ премие. «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхне сысна какайĕ туса илессипе тата талăксерен ӳт хуштараслăхпа палăрнăшăн çурçĕр зонăпа пĕрремĕш вырăна тухнăшăн 50 пин тенкĕ премии лекрĕ. Пирĕн районти уйрăм çынсенчен ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Чăваш бройлерĕ» АУОн гендиректорĕ Вадим Николаев агропромышленность комплексĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывнишĕн Раççей шайĕнчи пысăк наградăна – ылтăн медале – тивĕçрĕ. Ленин ячĕллĕ кооперативăн тĕп агрономĕ Петр Тунгулов та хаваслă кăмăлпа таврăнчĕ уявран. Ăна ялта ĕçлекен çамрăк специалистсене çурт-йĕр тума е туянма паракан субсиди тивĕçрĕ. «Пӳрте халĕ туса пĕтеретĕпех ĕнтĕ», – чунтан хаваслансчĕ вăл.

В.ЭВЕРККИ.




***Район представителĕсем наград илнĕ хыççăн. Сулахайран иккĕмĕшĕ – район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Е.Егорова.***

**Ноябрĕн 21-мĕшĕ - РФ Налук службин ĕçченĕсен кунĕ**

## БЮДЖЕТĂН ИККĔ-ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ – НАЛУКРАН

***Хăйĕн профессი уявне 2000 çултанпа кăна уявлаççĕ пулин те, укçа-тенкĕ пуçтарас ыйтупа ĕçлекен ятарлă служба, малтан âна коллеги тенĕ, I Петĕр патша вăхăтĕнчех пуçланса кайнă.***

Паянхи кун çĕршыв бюджечĕн иккĕ-виççĕмĕш пайĕ налукран пуçтарăнать. Патшалăх хыснине укçа-тенкĕ пухасси хăйсен чи яваплă задачи тесе куллен тăрăшаççĕ налукçăсем. Пирĕн районта вырнаçнă Федераллă налук службин районсем хушшинчи 5-мĕш инспекцийĕ кăçалхи тăхăр уйăхра кăна тĕрлĕ шайри хыснана тата бюджет мар фондсене 517394 пин тенкĕ укçа пуçтарнă, ку вăл пĕлтĕрхи январь-сентябрь уйăхĕсенчинчен 39,7 процент нумайрах. Бюджета пуçтарăнакан налук тӳлевĕнчен 52 проценчĕ – уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук.

Инспекцире пĕтĕмпе сакăр пай. А.Н.Кузнецов пуçлăх ертсе пынипе вĕсем хăйсен тĕп задачине мĕн пур яваплăха туйса пурнăçлаççĕ.

В.ТИТОВА.




***Инспекцин пай пуçлăхĕ Л.А.Васькейкина (сылтăмри) ĕçтешĕсемпе.***

– Ноябрĕн 21-мĕшĕ – РФ Налук службин ĕçченĕсен кунĕ –

### Налук службин хисеплĕ ĕçченĕсемпе ветеранĕсем!

***Професси кунĕпе чун-чĕререн саламлатăп Сире!***

***Паянхи налук служби çĕршывра республикăна укçа-тенкĕ тӳлĕшĕнчен хăрушлăхран кăларакан чи пĕлтерĕшлĕ хатĕрсенчен пĕри пулса тăрать. Эсир тухăçлă ĕçленĕрен, çĕнĕ технологисемпе усă курнăран Чăваш Енĕн социаллă пурнăçĕ лайăхланать, экономики аталанать.***

***Паян Сирĕн умăрта çĕнĕ те яваплă тĕллевсем. Професси ăсталăхĕ Сире налук тӳлесе тăракансемпе çыхăнса ĕçлессине пĕлсе йĕркелеме май парать. Обществăра правăпа граждан культурине, налук дисциплинине çирĕплетессишĕн тивĕçлĕ тӳпе хывасса малашне те шанса тăратăп. Служба тивĕçне лайăх пурнăçланăшăн пурне те тав тăватăп, çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп!***

Н.ФЕДОРОВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

### Районти налук органĕсенче вăй хуракан хисеплĕ ĕçченсем тата ветерансем!

***Пурне те професси уявĕпе саламлатăп.***

***Сирĕн çине пысăк ĕç тиенчĕ – вăхăтра тĕрлĕ налуксемпе тӳлевсем пухасси тата налук саккунĕсене пăхăнса тăрассине тĕрĕслесси. Çак ĕç районта çулсерен лайăхланса пырать. Ентешĕмĕрсен социаллă пурнăçне, районăн экономикине аталантарма çул уçать.***

***Пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçупа çитĕнӳ, пурнăçра иксĕлми телей сунатăп.***

А.КНЯЗЕВ,
Шупашкар район пуçлăхĕ.

## ШЕМШЕРПЕ ШĔНЕРПУÇĔНЧЕ

Чылай ыйтăва пăхса тухма палăртаççĕ паянхи Пĕрлехи черетлĕ информаци кунĕнче. Вăл Шемшер тата Шĕнерпуç ял тăрăхĕсенче иртмелле. Унта РФ Президенчĕ Федераци Пухăвне янă çырура палăртнă задачăсене, граждансен социаллă пурнăçне лайăхлатассин, çул-йĕр строительствин ыйтăвĕсене тата ял хуçалăх отраслĕнчи ĕç-хĕле тишкерĕç.

В.АВЕРКИЕВА.

## «ОРЛЕНОКА» - КАНМА

Çамрăк армеецсен республикăри 40-мĕш вăйăисенче çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă Чăрăшкассинчи вăтам пĕлӳ паракан шкулăн 10 ачаран тăракан команди чăвашсен çулăмлă поэчĕ Çеçпĕл Мишши çуралнă кун, ноябрĕн 16-мĕшĕнче, ачасен Пĕтĕм Раççейри «Орленок» центрне туха кайнă. Вĕсем унта декабрĕн 16-мĕшĕччен канаççĕ.

Ю.СЕРГЕЕВ.

## САККĂРМĔШ ХУТ

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче Çĕнĕ Тутаркассинче ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн В.Н.Григорьевăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ майпа кĕрешес енĕпе саккăрмĕш хут республика турнирĕ иртнĕ. Унта районсемпе хуласенчен, çав шутра Хусанпа Ульяновскран, 125 спортсмен хутшăннă. Пирĕн районтан тĕрлĕ виçере Р.Петров (Кукеç), И.Трифонов, А.Павлов, В.Степанов (виççĕшĕ те Çĕнĕ Тутаркассинчен) спортсменсем çĕнтернĕ. 35 кг таякан хĕрачасен хушшинче Апашри Т.Базарнова малти вырăна тухнă. Вĕсен çĕнтерӳĕнче С.М.Петров, В.И.Смородинов, И.Г.Соловьев, В.Н.Григорьев, Д.В.Григорьев тренерсен тӳпи пысăк.

В.НИКОЛАЕВ.

**Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх**

***Юн кун, ноябрĕн 19-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **+1**, çĕрле **–4**

***Кĕçнерни кун, ноябрĕн 20-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **–1**, çĕрле **–2**

***Эрне кун, ноябрĕн 21-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла **0**, çĕрле **0**

***Шăмат кун, ноябрĕн 22-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр е сумăр çăвать, кăнтăрла **+2**, çĕрле **–1**

Смотр-конкурс

# УПРАМАСАН ВĂХĂТСĂР ЯПĂХАТЬ

***Çулсеренех ирттерекен çак смотр-конкурса тĕрлĕрен йышăнакансем пур. «Хамăр техникăпа хамăр хуçа», – çаплараx калантне илтнĕччĕ пĕр предприятин тĕп инженерĕ ял хуçалăх машинисене хĕл каçма лартнине тĕрĕслеме пынă комисси членĕсене. Çапли çаплах пуль-ха, анчах йĕркеллĕ упрамасан та техника вăхăтсăр япăхать. Хĕл каçипе çилĕ те самай çиет, йĕпенет те... Мĕнлерех хаклать-ха кăçалхи смотра Гостехнадзор инспекцийĕн районти пуçлăхĕ В.С.МИХАЙЛОВ.***

– Ял хуçалăх техникине хĕл каçма епле лартнине тĕрĕсленĕ май чылай хуçалăх ертӳçипе вĕсенчи инженерипе техника ĕçченĕсем тĕрĕс упрамаллине ăнланни сисĕнет, – ***пуçларĕ калаçăва Валериан Семенович.*** – Кăçалхи смотр-конкурса районти 24 хуçалăхран 18-шĕ хутшăнчĕç. Калаçăва лайăххинчен пуçларăмăр та, тăрăшуллисенех маларах палăртар. «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕ кăткăс ял хуçалăх машинисене ангарсене вырнаçтарнă, ыттисем асфальт сарнă ятарлă лаптăкра лараççĕ. Куйбышев ячĕллĕ кооперативăн уçă вырăнта пулин те, анчах тирпейлĕн вырнаçтарнă.

«Пучах», «Ольдеевская» предприятисенче те кăлтăк ытлашши пысăк пулмарĕ. Вĕсенчи тĕп çитменлĕх (ун пеккине ытти чылай предприятире те асăрхарăмăр) – ĕç органĕсемпе касакан çĕçĕсене консервацилеменни, урапасене шуратманни.

***– Кăлтăк терĕр те, ытларах чух мĕнлерех асăрхаттару тума тиврĕ?***

– «Атлашевский», «Чурачикское», «Атăл», «Искра», Ленин ячĕллĕ хуçалăхсем упрама лартассине кая юлса пуçăннине пула район пуçлăхĕн йышăнăвĕнче палăртнă вăхăт тĕлне ĕлкĕреймерĕç. Вĕсенче ятарлă тĕрев çине мĕн пур машинăна вырнаçтарса тухманнчĕ, культиваторсен, плугсен ĕç органĕсене, сеялкăсен суха тимĕрĕсене, акакан катушкăсене консервацилесе пĕтерменччĕ, машинăсен пур урапине те шуратманччĕ. Кăткăс ял хуçалăх машинисен ангарĕнчи тырă вырмалли тата вырлăх апачĕ хатĕрлемелли комбайнсен пайĕсемпе агрегачĕсене кирлĕ пек консервацилесе пĕтермен.

***– Техникăна хĕл каçма пачах лартманнисем çук-тăр?***

– Ун пеккисем те пур. Смотр-конкурс иртнĕ вăхăт тĕлне «Прогресс», Кадыков ячĕллĕ, «Слава», «Туруновский», «Дружба», «Шупашкар кайăк-кĕшĕк фабрики», Свердлов ячĕллĕ предприятисем лартма та тытăнманччĕ. Хăш-пĕр машинăна упрамалли ятарлă вырăна та илсе пыманччĕ, ăçта кирлĕ унта тимĕр-тăмăр йăваланатчĕ, çавăнпа вĕсене конкурса хутшăнтарас темерĕмĕр. «Букет Чувашии» агрофирмăн производство базине сутнă май ял хуçалăх машинисене урăх района, «Гвардеец» предпрятирен вара – «Агарикус» обществăна (юлашкинчен асăннă предприятие «Агарикус» илнине вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ. – ***Ред.***) куçарнă та, вĕсене те конкурса кĕртмерĕмĕр.

***– Хăш хуçалăх мала тухма пултарчĕ?***

– Чăнах та, смотр-конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе лайăххисене те, япăххисене те палăртрăмăр. Начаррисен шутĕнче «Атлашевский», «Атăл», «Чурачикское» хуçалăхсем. «Пучах» тата «Ольдеевская» предприятисене вара ырламалла. Конкурса 200 баллă тытăмпа хакланă май 194 балл пухнă «Приволжское» пĕрремĕш вырăна тухрĕ, 189 баллă Куйбышев ячĕллĕ кооператив – иккĕмĕшĕнче. Виççĕмĕш вырăн никама та лекмерĕ. Çĕнтерӳçĕсене килес çулхи районти Акатуйра чыслăпăр.




***«Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕнче техникăна çакăн пек, яланах йĕркеллĕ упраççĕ. 2007 çулхи фото ӳкерчĕк.***

В.ЭВЕРККИ калаçнă.

Калам-ха хамăн шухăша

# МĔНШĔН ХĂШĔСЕМ ЫЙТКАЛАСА ÇӲРЕÇÇĔ?

Ыйткалакансем камсем вĕсем? Çĕр çинче чипер пурăнма пĕлменнисем, çын сăпатне çухатнисем мар-ши? Мĕнле майпа ыйткалакан шайне анса ларнă-ши?.. Вĕсен ушкăнĕсем те пур ĕнтĕ. Эпĕ вĕсене çакăн пек пайланă пулăттăм. Пĕрремĕшсем – эрех ĕçсе кил-çуртсăр юлнисем. Ĕçекен çынна тĕрлĕ майпа та улталама пулать. Тĕслĕхрен, çынна пĕр кĕленче эрех илсе паратăп тесе тĕрлĕ хутсем çине алă пустарни. Иккĕмĕшсем – ачисем килтен хуса кăларса янисем. Намăса пĕлмен çамрăксем хăйсен асламăшĕсемпе аслашшĕсене е ашшĕ амăшĕсенех пăхас мар тесе килтен кăларса яраççĕ, пурте ваттисен çуртне ямаççĕ-çке! Виççĕмĕшсем нумай çул хушши тĕрмере ларса тухнă хыççăн киле таврăнаççĕ те кил-çуртсăр юлнине ăнланса илеççĕ. Вĕсене никам та кĕтмест, прописка çук, ун çинчен манса кайнă! Мĕн тăвас? Ирĕксĕрех урамра пурăнма лекет. Тăваттăмĕшсем ют хулана ĕç шырама каяççĕ те çухалса каяççĕ, документсăр юлаççĕ. Çын халăх хушшинче пĕччен тăрса юлать. Киле таврăнаймасть: укçа, паспорт çук. Кĕçех те ыйткалакан шутне анса ларать. Пиллĕкмĕшсем – хваттер сутас е улăштарас тесе шанчăксăр организацисемпе çыхланса кайса кил-çуртсăр тăрса юлнисем. Ăçтан пĕлмелле-ши: кама шанмалла, кама – çук? Çак ушкăнсене пĕр блока кĕртме пулать. Вĕсем ирĕксĕр ыйткалакансен шайĕнче.

Тепĕр блока çаксене кĕртме пулать: пĕрремĕш ушкăнра кил-çурт тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ пурăнакансем. Анчах ыйткаласа çӳресе укçа тăваççĕ – «операци тума кирлĕ», «ача чирлĕ» тата ыт.те, табличкăсемпе çӳреççĕ е сăмах вĕççĕн каласаççĕ. Иккĕмĕшсем тĕрлĕ инструментсемпе каласа укçаллă пуласшăн – чун уççи. Пĕтĕмĕшле каласан, çак çынсен ĕçĕ – ыйткаласа çӳренинче.

Н.КОНДРАТЬЕВА, Шăнкас.

# САККУНСĂР ВĂЙĂ САЛОНĔСЕМ

«Пĕр каçра 25 пин выляса ячĕ», – терĕ пĕр паллакан çын хăйĕн юлташĕ пирки. Çапла, азартлă тĕрлĕ вăйă хăшĕсене усал сывлăш пекех илĕртет. Пĕлтĕрхи март уйăхĕнче вăйă салонĕсене чарса лартасси тата букмекер кантурĕсемпе тотализаторсенче тата вăйă автоматĕсен залĕсенче азартлă вăйăсене чарса лартасси пирки пирĕн республикăра та саккун йышăнчĕç. Ун чухне казиносене çеç ĕçлеме хирĕçлемен. Анчах пур çĕрте те пăхăнаççĕ-и-ха çав саккуна? Теприсем Интернет-салонсем йӳтĕмĕпе те витĕнеççĕ иккен. Саккуна пăсакансем пирки «шанчăклă телефонпа» та пĕлтерме пулать. **Унăн номерĕ: 62-82-23**.

Сăмах май, килес çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен казиносене те чармалла иккен, çакна тума федераллă саккун хистет.

В.АВЕРКИЕВА.

Ыйту-хурав

## АЧА ÇУРАЛСАН

***Ман кин декабрьте иккĕмĕш ача çуратать. Уншăн миçе тенкĕ парĕç-ши?***

В.СЕЛИВАНОВА.

Ача çуралсан патшалăх, ача миçемĕш пулнине пăхмасăр, пĕр хутчен паракан пособи 8840 тенкĕ те 58 пус уйăрать.

## СТИПЕНДИ ЧУХЛĔ

***Йывăр çын чухнехи пособи студенткăсене миçе тенкĕ параççĕ-ши?***

Л.ЛАВРЕНТЬЕВА.

Производствăран кайса пуçламăш, вăтам тата аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренекен хĕрарăмсене хăйсем суйласа илнĕ тăрăх е йывăр çын чухнехи тата ача çуратнăшăн паракан пособи ача çуратиччен 70 кун хушшинче кашни уйăхра 326 тенкĕ, е вĕсем вĕренекен заведени çирĕплетнĕ стипенди чухлĕ пособи параççĕ.

Район халăхне социаллă пулăшу паракан пай.

# ТЫР-ПУЛПА – ИНТЕРВЕНЦИ ФОНЧĔ

Тыр-пулпа интервенци фончĕ йĕркелессине пĕлтерет республикăн Ял хуçалăх министерстви. Кăçал апат-çимĕçлĕх тыр-пулран кăна мар, фуражлăхран та Атăлçи федераллă округра ятарлă фонд тума палăртнă. 3-мĕш класлă апат-çимĕçлĕх тулăна тоннине 5100 тенкĕпе, 4-мĕш класлине 4900 тенкĕпе туянаççĕ. Апат-çимĕçлĕх ыраша «А» ушкăнрине 3900 тенкĕпе йышăнаççĕ, 5-мĕш класлине – 4100 тенкĕпе, фуражлăх урпана – 3800 тенкĕпе.

В.ТИТОВА.

## МИЛИЦИ СВОДКИНЧЕН

Вылăх пусмалли вăхăт çитсе пырать, çакна сиснĕ выçă кашкăрсем. Акă, икĕ уралли (хальлĕхе хăй паллă мар) Шинер Тăрăнти Г.Павлова (1972 ç.ç.) сарайĕнчен икĕ хĕл каçнă çуллă сурăхне сĕтĕрсе тухнă. Вăлах О.Никитин (1974 ç. ç.) картишне те кĕнĕ, икĕ çу каçнă шурă сурăхне çурăмĕ çине çавăрса хунă та карта урлă сикнĕ. Типçырмари Г.Гаврилова килĕнчен такам 50 литр кĕрекен чугун хуран пĕçертсе кайнă. Сарапакассинчи О.Владимирова (1950 ç.ç.) гаражĕнче икĕ фляга, ытти япаласем çĕр тĕпне çĕтнĕ. Çак «кашкăрсене» шыратпăр. Ноябрĕн 16-мĕшĕнче Кайри Ункăпуç çыннисем «Атăл» кооперативăн сысна фермин складĕнчен икĕ михĕ фураж вăрланă. Ноябрĕн 14-мĕшĕнче Урай Макаçри И.Осипов (1942 ç.ç.) асăрханса ĕлкĕрейменнипе кăмака çинчен ӳкнĕ, унăн больницăран пулăшу ыйтма тивнĕ. Çав кунах районти çар ĕç комиссариатĕнче осколкăллă мина тупнă. Телее, унăн çумĕнче взрывателĕ пулман, унпа вĕрентӳре усă курнă. Ăстакассинчи Е.Осипова (1945 ç.ç.) та тухтăртан пулăшу ыйтнă: пуçĕ çине темле майпа витре ӳкнĕ. Ноябрĕн 15-мĕшĕнче «Туруновский» хуçалăх йĕтемĕнче тулă парса çитерменни палăрнă.

ШĔП пресс-служби.

# ÇУЛ УРЛĂ КАÇНĂ ЧУХНЕ АСĂРХАНУЛЛĂ ПУЛАСЧĔ!

***«Таса уйра вăрăм сурпан выртать, мĕн вăл?» тесен водительсем унăн тупсăмне тӳрех пĕлеççĕ. Ара, яланах вĕсем çул çинче çӳреççĕ-çке. Анчах та çулĕ кашнинчех такăр пулмасть-çке: е руль умĕнче ларакансене, е çуран çӳрекенсене пула инкек сиксе тухма пултарать.***

Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи тăхăр уйăхра çуран çӳрекенсен айăнĕпе 26 авари пулнă. Çак тĕслĕхсенче 7 çын вилнĕ, 21-шĕ сусăрланнă. Çулталăк вĕçлениччен ку цифрăсем палăрмаллах ӳсме пултараççĕ. Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн начальникĕ К.И.Гаврилов пĕлтернĕ тăрăх, октябрь уйăхĕ çеç темиçе пулăмпа палăрса тăрать. 29-мĕшĕ тĕлне 12 çуран çӳрекен çине машина пырса кĕнĕ, вĕсенчен 6-шĕ вилнĕ, ыттисем сусăрланнă. Кунта çуран çӳрекенсен айăнĕпе 9 авари пулни паллă, тепĕр 3 тĕслĕхре водительсем айăплă.

Çын пурнăçĕ таталнă тĕслĕхсем çинче Константин Иванович уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Нумай чухне водительсем «зебра» урлă каçакансене ирттерсе ямаççĕ, трасса пушанасса вăрахчен кĕтсе тăмалли те пулать. Акă, октябрĕн 11-мĕшĕнче «Мускав-Уфа» çулăн 645-мĕш километрĕнче Киров облаçĕнчи водитель çул урлă каçма ирĕк паракан паллă патĕнче утакан аслă ăрури пирĕн район çыннине çапса хăварать. Шел, йывăр сурансене пула вăл инкек пулнă вырăнтах вилет. Октябрĕн 19-мĕшĕнче çак çул çинчех Тăвай районĕнчи водитель тĕп хулара пурăнакан хĕр çине пырса кĕрет, вилмеллех амантать. Ӳсĕр çыннăн тимлĕх çухални пирки калама та кирлĕ мар. Ун чухне ытларах хăйсен айăпĕ. «Мускав-Уфа» çул çинче, сăмахран, 666-мĕш километрта Шорчекассинчи арçын октябрĕн 17-мĕшĕнче, 638-мĕш километрта Шупашкарта пурăнакан çамрăк октябрĕн 18-мĕшĕнче ӳсĕрскерсем юраман çĕрте çул çине тухса машина айне пулса вилнĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕнче «Вятка-2» çул çинче 4-мĕш километрта, октябрĕн 26-мĕшĕнче 11-мĕш километрта пирĕн район çамрăкĕсем çине машина пырса кĕрет. Ку хутĕнче те каччăсем хăйсем айăплă пулнă – палăртман вырăнта çул урлă каçма хăтланнă.

Такăр çул пурри лайăх, анчах вăл савăнăçпа пĕрле хурлăхне те кăтартма пултарать. Çавăнпа та çул урлă каçнă чухне асăрханулларах пуласчĕ!

А.СУСМЕТ.



# Ватлăх хисепе юрататъ



## ТРАКТОР КĔРЛЕВĔЛЛĔ ХĔР ĔМĔРĔ

Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнчи Шарпашра çуралса ӳснĕ К.К.Агандеевана (87 çулта), Аслă вăрçă çулĕсенче тракторпа вăй хунăскере, совет тапхăрĕнче çӳллĕ трибунăсем çине сăмах калама час-часах хăпартнă, пионерсемпе нумай тĕл пултарнă. Вăрçă пуçлансанах «Броневик» колхозра çурлапа тырă вырнă вăл, Сăр хĕррипе окоп та чавнă. «1942 çулта плугарьте ĕçлерĕм, хыççăн трактористсен курсĕнче вĕрентрĕç мана, – аса илет Клавдия Кирилловна. – Вара трактор рулĕ умне лартрĕç. МТС колхозсене сухалама яратчĕ. Тепĕр 3 хĕре трактор шаннăччĕ. Пирĕн çамрăклăх уй-хирте иртрĕ...»

Акă кĕтнĕ самант тинех çитнĕ: Аслă Çĕнтерӳ! Фронтран каччăсем килнĕ. Хĕрсене вăйăсенчен килĕсене ăсатнă. Клавăна Иван Агандеев куç хывнă, вăйăра ун çумĕнчен кайман. Иккĕшĕ шуçăм кăвакарса килнине пĕрре çеç мар сăнанă. Кĕçех пĕр çемьене пĕрлешнĕ. Клавăн ача юлать. Ĕнтĕ йывăр çынна тракторпа аппаланма та çăмăлах мар. 1946 çулхи кĕр сухине пысăк хырăмпах ĕçлесе пĕтерет. Вара МТС директорĕ: «Хиртех çуратса пăрахăн тата...» – тесе трактор çинчен антарать.

Агандеевсем 5 ача ӳстернĕ, çурт-йĕр çавăрнă. Шел, упăшки вăрçă суранне пула вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Ăна халĕ ывăлĕпе кинĕ пăхаççĕ. Кинĕ, Эльвира, почтальонка, «Тăван ене» те салатать.



Фото ӳкерчĕкĕ Ю.МИХАЙЛОВĂН.

К.К.Агандеева.

Тĕлĕнмелли çакă: 60 çул иртсен МТСра вăй хунă хĕр-трактористсем тĕл пулу йĕркеленĕ, вăрçă çулĕсене аса илнĕ.

Н.ГЕННАДЬЕВ.

## САРĂХНĂ ФОТО ӲКЕРЧĔК



Л.В.Быкова (сулахайри) çарта.

Кӳкеçри Шоссе урамĕнче пурăнакан Л.В.Быкова 85 çул тултарчĕ. Ăна поселокри ветерансен канашĕн председателĕ В.Ф.Генералова килне çитсех ăшăн саламларĕ, сывлăх сунчĕ. Любовь Васильевна Инçет хĕвел тухăçĕнче çар хĕсметĕнче тăнă, складсене хуралланă. Салтак аттине хывсан унтах юлнă, пулă тытакан пăрахутсем çинче ĕçленĕ, чăваш каччипе çемье çавăрнă. Иккĕшĕ Иркутск, Челябинск, Уральск хулисенче телей шыранă. «Тупрăмăр, – терĕ Любовь Васильевна. – Аван пурăнса ирттертĕмĕр, 1995 çулта Кӳкеçе куçса килтĕмĕр. Нимшĕн те кулянмастăп, паянхи çамрăксене çакна çеç сунатăп: телей шырама ан ӳркенĕр, кирлĕ пулсан, пирĕн пек, тĕнче касса çӳрĕр, тен, вăл сире инçетре кĕтет. Эпир, чăваш хĕрĕпе ывăлĕ, никамран та хăраман».

Вăт, çапла ыр сунчĕ Отечественнăй вăрçă ветеранĕсемпе танлаштарнă ĕç ветеранĕ.

## ЙЫШ ХУШĂНАТЬ

Кăçалхи 9 уйăхра район халăхне социаллă пулăшу паракан пая 104 çын – «Ĕç ветеранĕ», 14 çын «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят илес ыйтупа килчĕ. Октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне 97 пенсионера «Ĕç ветеранĕ» ят панă, вĕсенчен 95-шĕ «Ĕç ветеранĕ» удостоверени те илнĕ. 11 пенсионера «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят панă, вĕсенчен 10-шĕ унăн удостоверенине те алла илнĕ тата Чăваш Республикин «Вăрçă çулĕсенче тата тылра вăй хунисене социаллă пулăшу парасси çинчен» саккунĕнче пăхнă çăмăллăхсемпе усă курать.

А.КОНСТАНТИНОВ,
район халăхне социаллă пулăшу паракан пай пуçлăхĕ.

## ÇУРАН УТĂР

Нумай пурăнас тесен этеме тĕрĕс сывлама пĕлни те кирлĕ. Куллен сывлав гимнастики тăвăр. Усă сывлăшра кунне 2-3 сехетрен кая мар çӳресен организм кислородпа пуянланать. Çуран утларах çӳресен ура мышцисене тĕреклететĕр. Пенсионерсемшĕн ку – сывлăха çирĕплетмелли чи меллĕ май.

Вырăн çинче нумай выртакан ватă çын урисем хăйне тытми пулнине асăрхатпăр. Ку вăл чире пула мар, ура мышцисем вăйсăрланнипе пулать. Британи тĕпчевçисем çакна палăртнă: пĕрмай вырăн çинче выртма юратакансем физкультурăпа туслă çынсенчен биологи тĕлĕшĕнчен илсен вăтамран 10 çул аслăрах-мĕн. Куллен физкультура тăвакан е çăмăл ĕçлекен ватăсем çирĕп, нумай пурăнаççĕ. Паллах, аслă çулхисен çамка тăрăх тар юхиччен утмалла-чупмалла мар.

К.СМИРНОВ.

## Е АВТОМОБИЛЬ, Е КОМПЕНСАЦИ...

***Эпĕ – Тăван çĕршывăн аслă вăрçин инвалидĕ, инвалид автомашини илме черетре тăратăп. Ăна мана хăçан парĕç-ши?***

А.ФЕДОРОВ, Хĕрлĕçыр.

Раççей Президенчĕн 2008 çулхи майăн 6-мĕшĕнчи «Инвалидсене социаллă пулăшу парас тĕллевпе пурнăçламалли мерăсем çинчен» указĕпе килĕшӳллĕн вăрçă инвалидĕсене тата вĕсемпе танлаштарнă, ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствинче черетре тăракан çынсене çулталăк вĕçленичченех инвалид автомобилĕ е уншăн компенсаци 100-шер пин тенкĕ уйăрма палăртнă. Çак указ 2005 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен черете тăнă инвалидсене кăна пырса тивет. Республикăра вĕсенчен 160-шне октябрьте компенсациленĕ, м. т. вĕсем алла автомашина мар, укçа илесшĕн пулнă. Чăваш Енри 327 инвалида çулталăк вĕçлениччен ВАЗ-2107 машина пама палăртаççĕ пулсан, пирĕн районти Аслă вăрçăн 6 инвалидĕ 100-шер пин тенкĕ компенсаци илнĕ, тепĕр 16-шĕ автомобиль илме кăмăл тунă.

С.СЕРЕГИН хуравланă.

## ÇУТ ÇАНТАЛĂКА

*Çут çанталăк çынсăр та илемлĕ,*
*Çын кăна чыссăрлать ăна.*
*Çут çанталăк нихăçан кивелмĕ,*
*Ватăлатпăр эпир çеç кăна.*

*Çут çанталăк пирĕнтен те юлĕ,*
*Пурăнĕ вăл, ун – хăйĕн саккун!*
*Ĕмĕрех хĕвел ялкăшса кулĕ,*
*Ĕмĕрех çиçсе тăрĕ çак кун!*

*Çавăнпа та эп паян калатăп:*
*Çут çанталăка эс ан чыссăрлат!*
*Çулсерен эп йывăççем лартатăп,*
*Эс те, ман пекех, йывăççемларт…*

Арефий КУШАР,
Матикасси.

**Ыйту-хурав**

## ХĔР-ЗЕНИТЧИЦА - ИШЛЕЙРЕН

***«А зори здесь тихие» илемлĕ фильма нумайăшĕ курнă ĕнтĕ. Самолетсене зениткăран персе антаракан хĕр-салтаксен юлашки паттăрлăхĕ çинчен вăл. Пирĕн районти вăрçă ветеранĕсенчен зениткăран перекен салтак пулса çапăçнă çынсем пур-ши?***

В.СИДОРОВ, Кӳкеç.

Вĕсенчен пĕри Ишлейри Совет урамĕнчи 47-мĕш çуртри 52-мĕш хваттерте пурăнать. Вăл – Нина Михайловна Кольцова, 1923 çулта Ишлейре çуралнă, унтах вăтам шкул пĕтернĕ. 1942 çулта ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ, артиллери хатĕрĕнчен – зениткăран – пеме вĕрентнĕ. Мускава вĕçсе пыракан нимĕç самолечĕсене персе антарассишĕн пынă çапăçусене хутшăннă, темиçе самолета тĕл персе тивертнĕ. Каярахпа Смоленск тата ытти хуласене сывлăшран тапăнса килекен тăшман самолечĕсенчен сыхлама хутшăннă. Аслă Çĕнтерĕве Германире кĕтсе илнĕ. Çапăçусенче палăрнăшăн ăна орденсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Г.НИКОЛАЕВ,
Ишлей ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн председателĕ.

## ТЫТКĂНРА ПУЛНĂ

***Районта нимĕç фашисчĕсен тыткăнĕнче пулнă çынсем юлнă-ши?***

С.МАКСИМОВ,
Тутаркасси.

Пурăнаççĕ-ха. Сăмахран, Ишлейри Екатерина Ивановна Соловьева (1923 ç. ç.). Шупашкарти ача çуртĕнче пурăннăскер, хăйĕн ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара çырăннă, телеграфист ăсталăхне вĕреннĕ. Ăна партизансен отрядне яраççĕ, çапăçусене хутшăнать, ытти партизансемпе тыткăна лекет, икĕ хутчен персе пăрахма тăраççĕ – чĕрĕ юлать, тыткăнрисен лагерьне лекет. Малтан усă пĕлĕт айĕнчех тытаççĕ, унтан – баракра. Вăл крематорире çунтарма пин-пин çынна турттарса пынине курнă. Хĕрлĕ Çар тăшмана хăваланăçемĕн тыткăнрисене Хĕвел анăçнелле куçарнă чухне темиçе çынпа пĕрле выртса юлать, тыткăнран хăтăлать. Кĕçех совет салтакĕсем кураççĕ. Аслă Çĕнтерӳччен госпитальте ĕçлет. Нумаях пулмасть-ха 85 çул тултарчĕ.

Н.НИКИШИН хуравланă.

## МОНЕТИЗАЦИЛЕМЕ ЫЙТНĂ

***2009 çулта соцпакет илсе тăма килĕшмен миçе çын-ши районта тата республикăра?***

Н.ПЕТРОВ,
Ишлей.

Эсир панă ыйтăва федераци çăмăллăхçисен октябрĕн 1-мĕшĕччен татса памалла пулнă. Республикăра вĕсен 79%-чĕ çак çăмăллăха монетизацилениме ырланă. Пурĕ 91,2 пин çын соцпакета пĕтĕмпех е унăн пĕр пайне çеç илсе тăма килĕшмен (72,1 %-чĕ соцпакета пĕтĕмпех илсе тăма килĕшмен, 2,2 %-чĕ унăн медицина пайне çеç илсе тăма килĕшмен, 4,6 %-чĕ транспорт пайне çеç илсе тăма килĕшмен). Çакăн пеккисем те пур: 500 çын майлă соцпакета пĕтĕмпех е унăн пĕр пайне кăна илсе тăма килĕшменни пирки çулталăк пуçламăшĕнчен пуçласа çырнă заявленисене каялла илнĕ. Районта федерацин 3889 çăмăллăхçи соцпакета пĕтĕмпех е унăн пĕр пайне çеç илсе тăма килĕшмен: соцпакета пĕтĕмпех – 2527, унăн медицина пайне çеç – 31, унăн транспорт пайне çеç – 3313 çын.

Э.ФИЛИППОВ, управлени пуçлăхĕн çумĕ.

## ПЕНСИОНЕРСЕМ ТЕ...

Районти пĕрремĕш тĕслĕхлĕ библиотека (вăл Çĕньял-Покровскинче) 5 çул тултарнă. Унăн çуралнă кунне тепĕр ĕçпе палăртаççĕ: ял администрацийĕ пулăшнипе компьютерсен курсĕ ĕçлет. Вĕрентекенни – педуниверситетăн 5-мĕш курс студентки Л.Захарова. «Унта Раççейри пенсионерсен союзĕн Çĕньял-Покровски ял тăрăхĕнчи элчи Р.Анисимова, З.Суркова, Г.Яковлева (килĕнче компьютер пур) пенсионерсем çӳреççĕ, ытти пенсионерсене явăçтарма тăрăшатпăр», – терĕ Г.Мочалова библиотекарь. Шкул ачисем, студентсем кунти икĕ компьютертан Интернета кĕреççĕ.

**Страницăна Ю.МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**ПРОДАЮ**
**керамзитобетонные блоки 20х20х40, цемент. Тел.: 89050284130, 89033462293.**

**Собственник** земельной доли Тюрин А.П. сообщает о намерении выделиться из землепользования КСХ «Росса-1» Чебоксарского района ЧР в счет доли 2,53 га пашни, 0,18 га пастбища около д.Анаккасы. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельной доли Васильева Е.В. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК колхоза «Ленина» Чебоксарского района ЧР в счет доли 2,97 га пашни, 0,29 га пастбища в поле № 7 третьего полевого севооборота, расположенного в д.Байсубаково. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**ПРОДАЮ ЗЕРНО С ДОСТАВКОЙ.**
**ТЕЛ.: 2-12-07, 89279932736.**

**Собственник** земельной доли (по наследству) Загорская Т.В. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР в счет доли 2,03 га пашни в поле №6 напротив д.Яуши. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельной доли Алексеев В.Г. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК «Искра» Чебоксарского района ЧР в счет доли 2,48 га пашни в поле №9. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Участник** долевой собственности на землепользование СПК-колхоз «Пучах» Чебоксарского района ЧР Якимова А.К.- 0,10 га сообщает о намерении выделить земельный участок № 1 второго севооборота для расширения личного подсобного хозяйства до 0,50 га за счет земельных долей. Возражения просим присылать в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельной доли Федоров В.Н. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК «Искра» Чебоксарского района ЧР в счет долей 133,92 га пашни в поле № 3 и 52,08 га пашни в поле №7. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельной доли Трифонова М.В. сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР в счет доли 2,17 га пашни в поле № 5 кормового севооборота $\frac{Vк}{54}$1 около д.Василькасы. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственники** земельных долей Селедкин Г.Ю., Селедкин О.Ю. сообщают о намерении выделиться из землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в счет долей по 1,47 га пашни в поле № 5 третьего полевого севооборота западнее с.Анат-Киняры. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,0769 га с кадастровым номером 21:21:15 09 03:0400, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, юго-восточная окраина д.Вурманкасы (земли сельскохозяйственного назначения), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,0487 га, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, с.Синьялы, ул.Мельничная (земли населенных пунктов), сроком на 1 год для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,0320 га с кадастровым номером 21:21:070202:216, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Пихтулино, ул.Пихтулинская (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,0719 га с кадастровым номером 21:21:150101:54, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Лапсары, ул.Комсомольская (земли населенных пунктов), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,05 га с кадастровым номером 21:21:070202:215, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Пихтулино, ул.Пихтулинская (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,1103 га с кадастровым номером 21:21:150701:75, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Асакасы, ул.Асакасинская (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Поправка**. В газете «Тăван ен» №№ 129-130 от 08.11.2008 г. в объявлении о выделении земельной доли Яблоковой Л.Д. вместо слова «поле №3 первого почвозащитного севооборота, рабочий участок №1 восточнее» следует читать «поле №6 первого полевого севооборота, рабочий участок западнее» и далее по тексту.

**Поправка**. В газете «Тăван ен» № 131 от 12.11.2008 г. в объявлении о выделении земельных долей вместо «Алексеев А.В.» следует читать «Алексеев А.И.» и далее по тексту.

**Поправка**. В газете «Тăван ен» № 105 от 17.09.2008 г. в объявлении о выделении земельных долей ЗАО «Прогресс» вместо фамилии «Васильев Г.Х» следует читать «Никифорова И.Г. и Никифоров Н.Г. в счет земельных долей по 1,265 га пашни» и далее по тексту.

## ОАО "ГАЗПРОМ"
### ФИЛИАЛ ООО "Газпром трансгаз Нижний Новгород"

### ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ

# УВЕДОМЛЕНИЕ

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Чебоксарском районе Чувашской Республики, что на территории Чебоксарского района находятся магистральные газопроводы (МГ), газопроводы-отводы (-перемычки, -лупинги, -резервные нитки, -шлейфы) и другие подземные объекты МГ (далее по тексту – газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см$^2$. Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не менее 0,8 метров.

"Правилами охраны магистральных трубопроводов", утв. ГГТН РФ 24.04.92г. (внесены дополнения 23.11.94 г.), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории района газопроводов составляет от 100 до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно-измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность – от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

е) производить геологосъемочные, геологоразведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации – собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ "О газоснабжении в РФ").

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц, допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования или повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласоваться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителя Чебоксарского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу:

***г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 25, тел. (8352) 30-54-09, 30-54-22.***

✵ ✵ ✵

Управление образования администрации Чебоксарского района выражает глубокое соболезнование родным и близким в связи с тяжелой утратой – кончиной

**Татьяны Андреевны**
**СТЕПАНОВОЙ,**

Заслуженного учителя ЧАССР, Отличника народного просвещения.

Коллектив Кугесьской средней общеобразовательной школы №1 выражает искреннее соболезнование Шумиловым Вере Арсеньевне и Валерию Серафимовичу по поводу кончины матери и тещи

**Татьяны Андреевны**
**СТЕПАНОВОЙ,**

заслуженной учительницы Чувашской Республики, Отличника просвещения РСФСР.

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru. Сайт www.tavan-en.cap.ru.

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: Ю.С.МИХАЙЛОВ

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 18.11.2008 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 2250. Заказ №
Индекс газеты - 54820.